Родионов В. Сăмахлăх çăлĕ ан типтĕр // Коммунизм ялавĕ. – 1988. – 26 чӳк.

*К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш государство премине илме тăратнă ĕçсем*

# Сăмахлăх çăлĕ ан типтĕр

Ĕлĕкхи чăваш мĕн çуралса çĕре кĕричченех сăвă-юрă, юмах-халап ытамĕнче пурăннă, вĕсемсĕр пĕр пысăк ĕç те туман, пĕр пысăк уява та палăртман.

Акă хĕле кĕтĕмĕр. Хĕрсем улах лараççĕ, тĕрлĕ алĕçĕ тунă май халап-юмах яраççĕ, юрă шăрантараççĕ. «Çĕнĕ юрпа çĕнĕ юрă юрламалла», — тенĕ ваттисем. Юрă арчи вара тĕпсĕр: тухать те тухать çаврăм хыççăн çаврăм сăвă-кĕвĕ. Çурхи уяв, сурхури тăваççĕ-и çамрăксем е кассерен çĕрĕ ярса юрлаççĕ — вăйă-кулăра иртет вĕсен яш ĕмĕрĕ, пурнăçри хуйха-суйха сирме пулăшать.

Ваттисен хăйсен йăли, хăйсен йĕрки. Калăмра вилнисене асăнмалла, ратнетаврашне пуçтарса сăра чӳклемелле. Лараççĕ те вĕсем тăванĕн кĕрекине, шăппăн юрласа яраççĕ: «Ыр ут юртать — çул юлать, ыр çын вилет — ят юлать, эпир вилсен мĕн юлать?» Çак философиллĕ ыйту тупсăмне юрăçсем хăйсемех пĕлтереççĕ: «Савăнни-кулни — çав юлать». Савăнни-кулни тени кунта тĕрлĕ юрра-ташша пĕлтернĕ ĕнтĕ.

Ывăл-хĕр мăшăрлантарнă-и, салтак ăсатнă-и е чир-чĕртен сыватнă — чăваш çыннин чĕлхи вĕçĕнче яланах илемлĕ те ăшă, кирлĕ чух çулăмлă та хаяр сăмах пулнă. Çав илемлĕ-сăнарлă сăмахра халăхăмăрăн философийĕ те, истори летописçĕ те, педагогикипе этики те, кăмăл-сипетлĕхĕпе нисепĕ те упраннă. Халăх сăмахлăхне хăшĕсем ытарлăн мулпа, ылтăн-кĕмĕлпе танлаштараççĕ. Манăн вара яланах кăкăр сĕчĕпе танлаштарас килет. Анне сĕчĕ пире ура тĕрекĕ панă пулсассăн, халăх сăмахĕ пире ĕçе-пуçа вĕрентнĕ, ăспа тăн панă, кĕçĕнтен асла кăларнă, çынпа çынла пурăнма хăнăхтарнă. Ку таранччен никам та халăхран ăслăрах та илемлĕрех калайман-ха, ӳлĕмрен те калаймĕ. Эпир пурте — çыравçăсем те, тĕпчевсĕ-вулавçăсем те — халăхăмăрăн сĕткенне тутанса çулçă саратпăр, хĕвел енне туртăнатпăр.

Пархатарсăр пепке амăшĕн кăкăрне çыртнăн. эпир те юлашки вунăçуллăхсенче тăван сăмахăмăр çăлкуçне суртăмăр пулас. Сурман пулсассăн та, тасатаймарăмăр ăна йăлма-пыльчăкран. Ырă йăла-йĕркене манăса кăлартăмăр. илемлĕ сăвва-кĕвве манса пĕтрĕмĕр. тăван-пĕтенĕмĕрсемпе хутшăнсах тăраймарăмăр. ялйышча пĕрле нимелененеймерĕмĕр. ‘Яш-кĕрĕм те тăван юрă-ташăран писет, вăл Хĕвеланăç культурине массăллă культурăна ытларах кăмăлла пуçларĕ. Ваттисем ăна ытарлăн: «Амăшĕн сĕтне тиркесе, вăкăр сĕтне иленнĕ», — тенĕ пулĕччĕç.

Çак лару-тăрура чăваш халăхĕн сăмахлăхне («Чăваш халăх сăмахлăхĕ» 1—6 томсем, Шупашкар, 1972—1987) çичĕ кĕнекен (6-мĕш том икĕ кĕнекепе тухнă) пухса та тĕпчесе кăларни типĕ çанталăкри сипетлĕ çумăр вырăннех пулчĕ. Çав кĕнекесенчен ашшĕ-амăшĕ халăхăмăр педагогикин ăсне илме пултарать. пултарулăх коллективĕсем сăвă-юрă вĕренеççĕ. сцена çинче тĕрлĕ ырă йăла-йĕрке кăтартса савăнтараççĕ. Философсем халăх шухăшлăхне, историксем аваллăх çулне-йĕрне тĕпчеççĕ, учительсем шкул ачисене илеме вĕрентеççĕ. Çав пичетленнĕ текстсем, чăваш халăхĕн мăнаçлăхĕ пулса, тĕнче культурин еткерлĕхне те кĕчĕç темелле.

«Чăваш халăх сăмахлăхне» кĕнĕ хайлавсен пĕр пайĕ тĕрлĕ çулсенче Венгрире, Польшăра, Францирс, Англире тата Италире пичетленчĕç. Европа халăхĕсене халăхамăрăн пуянлăхĕпе паллаштарма пултарчĕç.

Истори палăкĕ çеç мар иккен чăваш самахлăхĕн пуххи, вăл — чĕрĕ сĕткен çăлкуçĕ. Çав пухури çичĕ кĕнекерен кашнинех асăрханса тытатăн. Ăçтан кăна пуçтарман пулĕ унти текстсене: чăваш пурăнакан мĕнпур тăрăхран, мĕнпур кĕтесрен çырса илнĕ юрă-халап пур унта. Чылайăшне кĕнекисене йĕркелескенĕсем хăйсем пухса çӳренĕ иккен; çав ĕçе студентсене, сăмахлăха юратакансене те хутшăнтарнă. Миçе хут тухмарĕç пулĕ вĕсем халăхăмăрăн сăнарлă сăмахне пуçтарма! Кĕнекесене кĕрейменни те чылаях юлчĕ. архив пуянлăхĕ пулса тăчĕ.

Е. С. Сидорова доцент пире ытларах юмахсен тĕпчевçи пек паллă. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл çак сăмахлăх пуххине юмахсен кĕнекисене (1—2-мĕш томсем) тата вак жанрсене (5-мĕш том) хатĕрлесе панă, вĕсене классификацилесе, илемлĕх енчен тишкернĕ.

И. И. Одюков профессор пайти те сахал мар çак ĕçре. Вăл 3—4-мĕш томсем валли халăх юррисене пуçтарса йĕркеленĕ тата 6-мĕш томан 2-мĕш кĕнекине (унта мифсемпе халапсем кĕнĕ) хатĕрлесе кăлараканĕ. Сăмах май каласассăн, юлашки кĕнекене кĕнĕ чылай материал тĕпчевçĕн хăйĕн килĕнчи архивĕнче упранать. Ана вăл хĕрĕх çул ытла пуçтарнă.

Г. Ф. Юмарт тĕпчевçĕ — сăмахлăх пуххин кашни текстне суйласа тата вырнаçтарса тухаканĕ. Тĕп редактор ĕçĕсене тунипех çырлахман вăл. 3—4-мĕш томсене кĕнĕ чылай сăвва-юрра пухса йĕркеленĕ. Çак ученăй халăхăмăрăн мифологиллĕ эпосне тепĕр хут чĕртсе тăратма пулăшрĕ. Вăл 4-мĕш тома кĕртнĕ мăнкĕрӳ такмакне эпĕ пĕр туйăра çеç мар илтнĕ. «Чăваш халăх сăмахлăхĕнчен» вĕреннĕ эпир ăна» — тесе хуравлаççĕ туй ăстисем кашнинчех.

6-мĕш томăн 1-мĕш кĕнекине ача-пăча сăмахлăхне, тĕпрен илсен, вăхăтсăр çĕре кĕнĕ В. Я. Канюков кĕнекинчен («Ача-пăча сăмахлăхĕ», Шупашкар, 1964) илсе кĕртнĕ. Тĕрĕслĕхшĕн çакна каласа хăвармалла: çавăнти текстсене В. Я. Канюков, Н. Р. Романов пуçтарса хатĕрленĕ алçыруран илнĕ. Эппин, авторсен шутне çак тĕпчевçĕ ятне те кĕртмеллеччĕ пулĕ. Тен, малтан уйрăм кĕнекен кăларнине тата сăмахлăх пуххи валли хăйсем хатĕрлесе паманнине асра тытса, вĕсене иккĕшне те авторсен шутĕнчен кăлармалла пулман-ши? Хăшпĕр томсене хатĕрлес енĕпе чылай ĕç тунă В. А. Ендеровпа П. Н. Метин тĕпчевçĕсене авторсен ретне лартман-çке. Кунта пĕрпеклĕх кирлĕ-тĕр.

Паллах, çак «Чăваш халăх сăмахлăхĕн» пуххине мĕнпур текстăн çĕр пайĕнчен пĕр пайĕ те кĕреймен-ха. Çĕнĕ кăларăм (ăна малашне чăвашла-вырăсла хатĕрлесен аван пулмалла) кăларма пуçăнас ĕçре çак вунпилĕк çул хатĕрленĕ çичĕ кĕнеке тĕпре пуласси каламасăрах паллă.

Халăх сăмахлăхĕн çăлĕнчен кашни çын ĕçсе пăхайтăр, сăмахăмăр техĕмĕпе чунне уçайтăр тесессĕн, пирĕн чи малтан çăл тасатаканĕсен ĕçне хаклама пĕлмелле. Кӳтĕлĕшрен «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» пухха хатĕрлекен коллектива Чăваш государство премине парса чыслани питех те вырăнлă пулнă пулĕччĕ: паянхи культурăмăршăн та, унăн пуласлăхĕшĕн те.

**В. РОДИОНОВ,**
**филологи наукисен кандидачĕ.**